28-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 ДЕКАБРЬ 5 ЮНКУН 236 (6987) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаçачӗ

Сывӑ пултӑр ССР Союзӗн Конституцийӗ—социализмлӑ обществӑн конституцийӗ! Сывӑ пултӑр совет демократийӗ!

Сталинла Конституци кунӗ

Декабрӗн 5-мӗшӗ — Сталинла Конституци кунӗ. Совет халӑхӗпе унӑн ют çӗршывсенчи тусӗсем тӗнчери чи демократиллӗ конституцие — социализмлӑ обществӑн конституцине туса хунӑ куна уявлаççӗ.

1936 çулхи декабрӗн 5-мӗшӗнче Пӗтӗм Союзри Советсен Чрезвычайнӑй VIII-мӗш Съезчӗ аслӑ Сталинӑн доклачӗ тӑрӑх ССР Союзӗн Конституцине йышӑнчӗ. Çак событи ӗнтӗ этемлӗх историйӗн питӗ паллӑ страницине кӗрсе юлчӗ.

Сталинла Конституци обществӑллӑ çӗнӗ строя закон туса çирӗплетрӗ. Совет çӗршывӗ социализм туса хучӗ, эксплоататорла классене пӗтерчӗ, çынсен пӗртанлӑхне чӑннипех пурнӑçа кӗртрӗ, государствӑна тытса пырас пур ӗçе те ӗççыннисене активлӑн хутшӑнмалла турӗ, ССР Союзӗнчи пӗр-пӗрипе таччӑн та арканми туслӑхпа çыхӑннӑ халӑхсен нациллӗ государственноçне, культурипе хуçалӑхне туллин аталанма май пачӗ.

ССР Союзӗнче тунӑ пек улшӑнусене тӑвас тесе капитализмлӑ çӗршывсенче тӳрӗ кӑмӑллӑ миллионшар ӗççыннисем ӗмӗтленнӗ, халӗ те ӗмӗтленеççӗ.

Сталинла Конституци вӑл ССР Союзӗнчи халӑхӑн чӑн-чӑн демократизмне кӑтартса парать. Ун пек демократизм урӑх пӗр государствӑра та çук. Ытти государствӑсенче общество классене—пуянсемпе чухӑнсене, эксплоататорсемпе эксплоатациленекенсене пайланса тӑрать.

Совет влаçӗ халӑха сывӑх пулнипе вайлӑ. Совет демократийӗ пачах та парламентла демократи пек мар; совет демократийӗ вӑл чӑн-чӑн халӑх демократийӗ. Пирӗн халӑхӑн пӗрлӗхне, вӑл совет правительствипе большевиксен партине шанса тӑнине шӑпах çакӑнпа ӑнлантарса памалла ӗнтӗ. Совет правительствипе большевиксен партийӗн ӗççыннисен интересӗсемсӗр пуçне урӑхла интерессем çук та.

«Пирӗн профсоюз, производство, культура, спорт организацийӗсен тата рабочисен ытти тӗрлӗ вӗçӗ-хӗррисӗр организацийӗсен активлӑхӗнче, мӗнпур Совет Союзӗн анлӑ территорийӗ çинчи миллионшар совет хресченӗсене пӗтӗçтерсе тӑракан колхозсене тунинче, фабрикӑсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсенче, шахтӑсенче, чугун çулсем çинче социализмлӑ ӑмӑрту тӑтӑшах малалла ӳссе пынинче,—çаксенче пуринче те чӑн-чӑн халӑх демократизмӗ ӳссе чечекленни палӑрса тӑрать. Кун пеккине эсир ӗлӗкхи вӑхӑтра курмӑн, кун пекки вӑл пусмӑрлакансемпе пусмӑртисен классене пайланса тӑракан нимӗнле государствӑра та пулма пултараймасть, çавӑн пек пусмӑрлакансемпе пусмӑртисен классене пайланса тӑнине пирӗн çӗршывра Совет влаçӗ тахçанах пӗтерсе хунӑ» (Молотов).

Советлӑ, социализмлӑ демократи вӑл ССР Союзӗн Конституцийӗнче пуринчен те уçӑмлӑнрах палӑрса тӑрать.

Сталин вӑл—социализм Конституцине тӑваканӗ. Вӑл пӗр çӗршывра социализм тӑвасси çинчен Ленин вӗрентнине наука тӗлӗшӗнчен йӗркелесе, никӗслесе пачӗ. Вӑл социализмлӑ общество тӑвас ӗçе хӑй ертсе пычӗ, ССР Союзӗнчи халӑхсене пӗтӗм тӗнчери историллӗ çӗнтерӳ патне илсе çитерчӗ. Пирӗн çӗршыври пур халӑхсем те аслӑ Сталин çине çав тери юратуллӑ та вӗçӗмсӗр парӑнса пӑхаççӗ. Пирӗн çӗнӗ общество строительстви унӑн гениллӗхӗпе çуталса тӑрать, вӑл пирӗн çӗршывӑн Конституцине тума хавхалантарсе пычӗ, ӑна туса хучӗ.

Ленинпа Сталинӑн аслӑ партийӗ чӗннипе пӗтӗм совет халӑхӗ, пӗр çын пек пулса, хамӑрӑн Тӑван çӗршыва, хамӑрӑн чӑн-чӑн интересене, Сталинла Конституцире çырса хунӑ историллӗ çӗнтерӳсене хӳтӗлеме çӗкленчӗ.

Ленин çапла каланӑ: «Рабочисемпе хресченсен ытларахӑш пайӗ хӑйсен влаçне, Совет влаçне—ӗççыннисен влаçне хӳтӗлнине пӗлеççӗ, туяççӗ тата кураççӗ пулсан, çак ӗçӗн çӗнтерӗвӗсене вӗсене хӑйсене те тата вӗсен ачисене те культурӑн, этем ӗçӗ туса панин пур ырлӑхӗсемпе те усӑ курма май панипе пӗлеççӗ пулсан, çавӑн пек халӑха вара нихӑçан та çӗнтерейрес çук».

Отечественнӑй вӑрçӑн хаяр çулӗсенче пирӗн халӑх çав тери паттӑр та хӑюллӑ пулчӗ, мӗншӗн тесен ку вӑрçӑра халӑх нумай çулсем хушшинчи кӗрешӳре çӗнтерсе илнине хӳтӗлерӗ. Эпир пӗтӗм тӗнчипе чи малта пыракан обществӑллӑ строя—социализмлӑ демократизма хӳтӗлерӗмӗр. Эпир хамӑрӑн пӗтӗм халӑхӑн пуянлӑхне—çӗре, фабрикӑсене, заводсене, рудниксене, шахтӑсене, электростанцисене, чугун çулсене, колхозсене, совхозсене, машинно-тракторнӑй станцисене хӳтӗлерӗмӗр. Эпир хамӑрӑн çӗршывра пурнӑçа кӗртнӗ ӗç, канӑç, вӗренӳ, ватӑлсан пулӑшу илмелли правасене хӳтӗлерӗмӗр. Эпир мӗнпур нацисен пӗртанлӑхӗпе туслӑхне фашистла тискер кайӑксенчен хӳтӗлерӗмӗр. Эпир совесть ирӗклӗхне, сӑмах ирӗклӗхне, пичет ирӗклӗхне, пухусемпе митингсем тумалли ирӗке, обществӑллӑ организацисене пӗрлешмелли ирӗке хӳтӗлерӗмӗр, эпир хамӑр çӗнтерсе илнӗ пурне те тивӗç, пӗртан та тӳррӗн тата вӑрттӑн сасӑласа суйламалли суйлав правине хӳтӗлерӗмӗр.

Эпир çӗнтертӗмӗр! Пирӗн Хӗрлӗ Çар—халӑхри вӑхӑтри чи хӑватлӑ çар çӗнтерчӗ. Унӑн ялавӗсем çине халӑхсене ирӗке кӑлармалли тата туслантармалли таса лозунгсене çырса хунӑ. Пирӗн социализмлӑ экономика çӗнтерчӗ, вӑл тӑшманла государствӑсен экономикинчен лайӑхрах та вайлӑрах пулнине пӗтӗм тӗнче курчӗ. Совет идеологийӗ, Ленинпа Сталинӑн идеологийӗ çӗнтерчӗ.

Совет çыннисем этемӗн Сталинла Конституцире çырса хунӑ таса прависене çирӗппӗн те татӑклӑн хӳтӗлесе тӑраççӗ. Вӗсем ССР Союзӗнчи гражданинӑн обязанноçӗсене асра тытаççӗ: СССР Конституцине пӑхӑнмалла; законсене пурнӑçа кӗртмелле, ӗç дисциплинине пӑхӑнмалла, обществӑллӑ ӗçе тӳрӗ кӑмӑлпа тумалла, социализмлӑ пӗрлӗхлӗ пурнӑçӑн прависене хисеплемелле, совет стройӗн таса та никам пырса тӗкӗнме пултарайман никӗсӗ пулса тӑракан, хамӑрӑн Тӑван çӗршывӑн пуянлӑхӗпе хӑватлӑхӗн çӑлкуçӗ пулса тӑракан, ӗççыннисен пуян та культурӑллӑ пурнӑçӗн çӑлкуçӗ пулса тӑракан обществӑллӑ социализмлӑ харпӑрлӑха сыхласа çирӗплетсе пымалла.

«Тӑван çӗршыва сыхласси—ССР Союзӗнчи кашни гражданинӑн чи таса тивӗçӗ пулса тӑрать»,—тесе Сталинла Конституцире çырса хунӑ сӑмахсем совет çыннисене хамӑрӑн юратакан Тӑван çӗршывшӑн мӗнле çапӑçмаллине лайӑх кӑтартса пачӗç. Вырӑс халӑхӗн аслӑ йӑлисем, ССР Союзӗнчи мӗнпур халӑхсен йӑлисем социализмлӑ общество членӗсен аслӑ ӑстӑнлӑхӗпе пӗрлешрӗç. Вара çав тери хӑватлӑ вӑй пулса тӑчӗ, çав вӑй ӗнтӗ гитлерла вӑрӑ-хурахсен шӑлӗсене шӗкӗлчесе тухрӗ. Пирӗн патриотсем фронтра та, тылра та ӗмӗрне пулман паттӑрла ӗçсем турӗç. Большевиксен партийӗ тавра пӗтӗçнӗ, пӗр ирӗклӗхпе пӗрлешнӗ рабочи класс, колхоз хресченӗсем, совет интеллигенцийӗ советлӑ Тӑван çӗршывӑн мухтавлӑхӗпе хӑватлӑхне вайлӑлатрӗç.

Совет государствин вӑйӗн çӑлкуçӗсенчен пӗри пулса тӑракан пирӗн çӗршыври халӑхсен туслӑхӗ вӑрçӑ вӑхӑтӗнче татах та çирӗпленчӗ. Çӗнӗ тӗнче тӑвакан совет халӑхӗсен никам аркатайми сталинла туслӑхӗн вӑйӗ фашистла авантюристсене пӗтерсе тӑкрӗ. Çав авантюристсем расçсем пӗр-пӗрне курайманлӑхӑн, тискер кайӑкла шовинизмӑн наркӑмӑшлӑ вӑррине акса çитӗнтерме пикенчӗç, нумай нациллӗ Совет Союзне пӑхӑнтарса чуралантарма ӗмӗтленчӗç.

Совет государствин хӑватлӑхне Ленин—Сталин патийӗ нумай çулсем хушши паттӑрла кӗрешнине пула тунӑ. Патша вӑхӑтӗнчи хаяр террор условийӗсенче Ленинпа Сталин пролетариатӑн партине—большевиксен партине туса çирӗплетрӗç. Большевиксем—чӑн-чӑн патриотсем пирӗн çӗршыври рабочи класпа мӗнпур ӗççыннисене çине тӑрсах организациленӗ, вӗсене патша самодержавине хирӗç, капитализма хирӗç, социализмлӑ революцишӗн, хамӑрӑн Тӑван çӗршыва çӗнетессишӗн, ӑна çӗнӗрен çуратса çӗклентерессишӗн хӑйсене хӑйсем шеллемесӗр кӗрешме воспитани парса пынӑ.

Ленинпа Сталинӑн партийӗ халӑха çӗнтерӳ патне, социализмӑн аслӑ çӗнтерӗвӗсем патне илсе пычӗ. Пирӗн çӗршыва иккӗмӗш вырӑнти çӗршывсен шутне анса ларассинчен çӑлса хӑварнӑ Октябрьти революци халӑхсен дворянла-буржуалла-помещикле режимӗ сӑнчӑрласа лартнӑ вайӗсене ирӗке кӑларчӗ, пирӗн халӑхсем вара Совет влаçӗ çинче никӗслепсе çав тери вайлӑ аталанмалли майсем илчӗç. Кӗске вӑхӑтрах совет халӑхӗ çӗршыв ӗмӗрсем хушши кая юлса пынине пӗтерчӗ, социализмлӑ хӑватлӑ индустри туса хучӗ, колхозсем турӗ, культурӑна çав тери çӗклесе ячӗ.

Хӑйӗн ӑнаçӑвӗсемшӗн совет халӑхӗ пирӗн çӗнтерӳсене организацилекен тата хавхалантаракан большевиксен партине тав тумаллине пӗлет. Пирӗн Тӑван çӗршыв тӑшманӗсем Совет государствине пӗтерсе тӑкма темиçе хут та хӑтланса пӑхрӗç. Ленин—Сталин партийӗ çирӗплехӗпе нимӗн иккеленменнине пула, малашнехине курса тӑнипе ӑслӑлӑхне пула, Совет Союзӗ пур тӗрӗслевсенчен те çӗнтерекенӗ пулса тухрӗ. Социализмлӑ строй хӑйӗн аслӑ, никам çӗнтерейми вайне кӑтартса пачӗ. Сталин юлташ социализмла демократие никам та çӗнтерейрес çук тесе каланӑччӗ. Фашистла захватчиксене хирӗç пынӑ Отечественнӑй вӑрçӑ, тӑшмана тӗппипех аркатса тӑкнипе пӗтнӗскер, Сталин юлташӑн çав сӑмахне çав тери вайлӑн кӑтартса пачӗ. Фашизма çӗнтернинче эпир совет демократийӗн аслӑ çӗнтерӗвӗсене те куратпӑр.

Вӑрçӑн тӑватӑ çулӗ хушшинче хамӑр ухса тухнӑ йывӑр та мухтавлӑ çул çине каялла çаврӑнса пӑхса, пирӗн государствӑна, пирӗн ачасене, пирӗн тӑвансене мӗн тери пысӑк хӑрушлӑх хӑратса тӑнине уçӑмлӑн ӑнланса илсе, тунӑ çӗнтерӳн аслӑлӑхне пысӑка хурса, кашни совет çынни çапла калать:—Вӑрçӑри йывӑр çулӗсенче пирӗн Хӗрлӗ Çарла совет халӑхне Совет Союзӗн аслӑ çулпуçӗ—аслӑ Сталин малалла ертсе пынӑ — пирӗншӗн питӗ пысӑк телей!

Вӑрçӑран Совет государстви тата ытларах çирӗпленсе тухрӗ, унӑн авторитечӗ тата пӗтӗм тӗнчери вырӑнӗ калама çук ӳссе кайрӗ. СССР халӑхӗ вӑхӑтри цивилизацие фашисла аркатуçӑсенчен çӑлса хӑварчӗ, ирӗклӗхе юратакан халӑхсем ӑна мирпе хӑрушсӑрлӑхӑн шанчӑклӑ тӗрекӗ вырӑнне хурса хисеплеççӗ.

Халӗ эпир большвиксен парти, совет правительстви тавра, Сталин юлташ тавра нихӑçанхинчен те ытларах пӗтӗçсе мирлӗ строительство тапхӑрне пырса кӗтӗмӗр. Эпир хамӑрӑн задачӑсене лайӑх пӗлсе тӑратпӑр: пирӗн социализмлӑ обществӑн вайне çӗнӗрен чечеклентермелле, эпир ӑна тӑватпӑрах; пирӗн хамӑрӑн пӗтӗм тӗнчери туссем шанса тӑнине тӳрре кӑлармалла, эпир ӑна тӑватпӑрах. ССР Союзӗн экономика тӗлӗшӗнчи хӑватлӑхне малалла çирӗплетсе, хамӑрӑн творчествӑллӑ ӗçӗн шанчӑклӑ хуралçи пулса тӑракан Хӗрлӗ Çара малалла вайлӑлатса, халӑхӑн культурипе ырлӑхне ӳстерсе пырса эпир тунӑ çӗнтерӳсене çирӗплетӗпӗр, коммунизм строительствинче çӗнӗрен татӑклӑ ӑнаçусем тӑвӑпӑр.

Сталинла Конституци уявне кӑçал пирӗн халӑх СССР Верховный Советне суйлама хатӗрленнӗ вӑхӑтра палӑртать. Пӗтӗм халӑхӑн çӗнӗ суйлавӗ пирӗн халӑхӑн патриотла хӗрӳллӗ шухӑш-кӑмӑлӗсене, пысӑк ӑс-тӑнлӑха, хамӑрӑн халӑхӑн моральпе политика тӗлӗшӗнчи пӗрлӗхӗ ӳссе пынине, советлӑ халӑх демократийӗн вайне кӑтартса парӗ. Сталинла Конституци кунне эпир аслӑ Çӗнтерӳ хыççӑн хамӑрӑн çӗршывӑн пуласлӑхӗ тӗлӗшпе çӗнӗ шанчӑксем илсе палӑртатпӑр.



Мускав, Кремль

СТАЛИН юлташа

Хаклӑ Иосиф Виссарионович!

Ӗççынни депутачӗсен Шупашкар хула Совечӗн, хулари парти тата общество организацийӗсемпе пӗрле Сталинла Конституци кунӗ ячӗпе пухнӑ чаплӑ ларӑвӗ Сире, рабочисемпе хресченсен социализмлӑ государствин Тӗп Законне шухӑшласа çырнӑ çынна, хӗрӳллӗн саламлать тата Эсир этемлӗхшӗн çав тери нумай ӗçленӗшӗн Сире чун-чӗререн тав тӑвать!

Совет халӑхӗ Сталинла Конституци кунне нихӑçан та кӑçалхи пек çав тери хавхаланса, çав тери савӑнса та мухтанса уявламанччӗ-ха. Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ эпир çӗнтернипе вӗçленчӗ. Пирӗн çынсем çапӑçу хирӗсенче юн тӑкни, пирӗн çынсем тылра тар юхтарни сая каймарӗç. Вӗсем питӗ чаплӑ результат пачӗç. Халӗ пирӗн умма историллӗ çӗнӗ задачӑсем тухса тӑчӗç. Çак задачӑсем пирӗн çуркуннехи сад пек илемлӗ Тӑван çӗршыв калама çук чечекленсе ӳссе каяссине пӗлтереççӗ.

Вӑрçӑри йывӑр условисенче эпир государство влаçӗн чи аслӑ органне çӗнӗрен суйлама право туянтӑмӑр. Акӑ ӗнтӗ халь пирӗн пӗтӗм çӗршыв 1946 çулхи февралӗн 10-мӗшне—çӗнтерӳçӗ-халӑх хӑйӗн кӑмӑлне ирӗклӗн палӑртас куна—иртерме çав тери хавасланса хатӗрленет. Пур çӗрте те суйлав законне, Советсен VIII-мӗш Чрезвычайнӑй Съездӗнче Эсир тунӑ историллӗ доклада, Сталинла Конституцие вӗренеççӗ. Сталинла саманан чапӗпе аслӑлӑхне паян пӗтӗм тӗнчене калама çук вайлӑн кӑтартса панӑ. Çав саманан чапӗпе аслӑлӑхӗ халӑхӑн улӑпла чӗрине аслӑ савӑнӑçпа, халлапри пек пысӑк хӑватпа, Тӑван çӗршывӑн вӑрçӑри суранӗсене часрах тӳрлетме çав тери хытӑ тӑрӑшнипе, Тӑван çӗршыва тата вайлӑрах та пуянтарах туса хума тӑрӑшнипе тултарса тӑрать.

Чӑваш халӑхӗ хӑйӗн чӑн-чӑн телейне нумай нациллӗ социализмлӑ государствӑра—Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗнче тупрӗ. Çавӑнпа та чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсем ССР Союзӗнчи халӑхсен туслӑ çемьинче советлӑ Тӑван çӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне çапӑçусемпе ӗçре çав тери тӑрӑшса сыхларӗç. Çавӑн пекех пӗтӗм чӑваш халӑхӗ 1946 çулхи февралӗн 10-мӗшӗнче хамӑр Тӑван çӗршыва чунтан парӑнса ӗçлекен çынсемшӗн, малашне те Эсир кӑтартса панине таса чӗрепе пурнӑçа кӗртсе пыракан çынсемшӗн, большевиксен тӑванла партийӗн политикине пурнӑçа кӗртсе пыракан çынсемшӗн, халӑхшӑн мӗнле тӑрӑшмаллине, пирӗн тӑван Иосиф Виссарионович, Сирӗнтен вӗренекен çынсемшӗн сасӑлӗ.

СССР Верховный Советне суйлама хатӗрленсе, эпир хамӑр хуçалӑха малалла аталантарса пырас тӗлӗшпе çӗнӗ çитӗнӳсем тӑвӑпӑр, хамӑрӑн государство умӗнчи мӗнпур обязательствӑсене пурнӑçлӑпӑр, 1946 çулхи çуркуннене—вӑрçӑ хыççӑнхи пӗррӗмӗш çуркуннене хатӗрленес ӗçе вайлӑлатӑпӑр. Сире, хаклӑ Иосиф Виссарионович, çакӑн пек сӑмах парса, эпир çакна лайӑх пӗлсе тӑратпӑр: аслӑ Сталина панӑ сӑмах вӑл таса сӑмах пулса тӑрать. Эпир вӑл сӑмаха пурнӑçа кӗртетпӗрех!

Сире, Иосиф Виссарионович, халӑх ырлӑхӗшӗн ӗçлесе пурӑнма пӗтӗм чӗререн сывлӑх тата вӑй сунатпӑр!

Сывӑ пултӑр Сталинла Аслӑ Конституци!

Сывӑ пултӑр Сталинла Конституцие шухӑшласа çырнӑ çын, пирӗн атте, учитель, çулпуç—аслӑ Сталин!

Шупашкар хулинчи парти организацийӗсен секретарӗсен канашлӑвӗ

Иртнӗ кунсенче ВКП(б) Шупашкар хула Комитечӗ хулари предприятисенчи, шкулсенчи тата учрежденисенчи парти организацийӗсен секретарӗсен канашлӑвне туса ирттернӗ. Канашлура суйлавçӑсем хушшинче агитаципе пропаганда ӗçне туса пырас ыйтӑва сӳтсе-явнӑ.

Канашлура ВКП(б) Обкомӗпе горкомӗн пӗррӗмӗш секретарӗ Чарыков юлташ асӑннӑ ыйтупа доклад туса панӑ.

— Пирӗн çӗршыв,—тенӗ докладчик,—СССР Верховный Советне суйлама тимлӗн хатӗрленет. Çак пулас суйлав пирӗн советлӑ Тӑван çӗршывӑн политика тӗлӗшӗнчи пурнӑçӗнче питӗ паха событи пулса тӑрать.

Чарыков юлташ çакна палӑртнӑ: хулари хӑшпӗр пуçламӗш организацисем суйлав участокӗнче те, çавӑн пекех тата хӑйсен коллективӗсенчи работниксем хушшинче те ӗçе большевикла организациленӗ. Суйлавçӑсене государство влаçӗн аслӑ органне суйламалли йӗркепе паллаштараççӗ.

Анчах та çак ӗçсене халӗ çителӗклӗ тесе калама май килмест-ха,—тесе уйрӑмах палӑртнӑ Чарыков юлташ.—Чылай парти организацийӗсем суйлава хатӗрленес ӗçе активлӑн хутшӑнман. Агитаторсем суйлавçӑсем патӗнче сайра-хутра çеç пулкалаççӗ, хулари чылай предприятисенче кӑçал суйлава малтанхи хут хутшӑнакан çамрӑк суйлавçӑсем хушшинче ӗçлессине тивӗçлипе йӗркелемен. Вӗсене халӗ те суйлав законне вӗрентме тытӑнман. Килхуçи хӗрарӑмсем хушшинчи ӗçе те çителӗклӗ тесе калама çук.

Мӗнпур агитаципе пропаганда ӗçне халӗ çапла организацилемелле,—тенӗ докладчик:—пӗр суйлавçӑ та парти организацийӗн влиянийӗ тулашӗнче ан юлтӑр. Пирӗн ӗççыннисене Сталинла Конституцин аслӑ принципӗсене, совет гражданӗсен прависемпе обязанноçӗсене, пирӗн социализмлӑ государствӑн вӑй-хӑвачӗн çӑлкуçӗсене, тӗнчере чи малта пыракан совет демократийӗ усӑллӑрах пулнине, вӑл буржуаллӑ çӗршывсен демократийӗнчен лайӑхрах пулнине, большевиксен партийӗн—совет халӑхӗн историллӗ кӗрешӗвӗсене организацилесе хавхалантараканӗн аслӑ ӗçӗсене ӑнлантарса памалла.

Пирӗн умра халӗ çакӑн пек задача тӑрать: кашни суйлавçӑна пулас суйлава хатӗрлемелле, СССР Верховный Советне суйлама хатӗрленнӗ май ӗçре çӗнӗ çитӗнӳсем тумалла.

Сталинла Конституци кунӗ ячӗпе Шупашкарта пулса иртнӗ чаплӑ лару

Ӗнер, Советсен Çуртӗнче ӗççынни депутачӗсен Шупашкар хула Совечӗн Сталинла Конституци кунӗ ячӗпе пухӑннӑ чаплӑ ларӑвӗ пулса иртрӗ. Унта хулари партипе обществӑллӑ организацисен представителӗсем пулчӗç.

Чаплӑ ларӑвӑн президиумне ВКП(б) Чӑваш Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн секретарьне И. М. Чарыков юлташа, Чӑваш АССР Совнаркомӗн председательне А. М. Матвеев юлташа, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председательне З. А. Андреева юлташа, ВКП(б) Обком секретарӗсене Т. А. Ахазовпа Я. К. Павлов юлташсене, ВКП(б) Шупашкар хула комитечӗн секретарьне С. М. Ислюков юлташа, Шупашкар хула Совечӗн исполкомӗн председательне П. И. Аникин юлташа тата ыттисене те суйларӗç.

Чаплӑ лару хисеплӗ президиума ВКП(б) Центральный Комитечӗн аслӑ Сталин ертсе пыракан Политбюро составне тӑгӑллӑн алӑ çупса суйларӗ.

«Декабрӗн 5-мӗшӗ—Сталинла Конституци кунӗ» темӑпа Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ З. А. Андреева юлташ доклад туса пачӗ.

Чаплӑ ларӑва пухӑннисем халӑхсен аслӑ çулпуçӗ, тӗнчери чи демократиллӗ конституцие — социализмлӑ обществӑн конституцине тӑвакан Сталин юлташ патне ямалли саламлӑ çыру текстне çав тери хавхаланса йышӑнчӗç.

* * *

Чаплӑ лару хыççӑн пысӑк концерт пулчӗ. Ӑна Чӑвашсен государство академи театрӗн тата Чӑвашсен государство филармонийӗн артисчӗсем, çавӑн пекех тата хулари художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсем кӑтартрӗç.

Конституци хĕвелĕ

(ЮРĂ)

Хĕвел ăшшăн кулса пăхнăçем
Çуркунне çурăлаççĕ садсем.
Ку вăл — халăх телейĕ.
Çĕршыва çутатать,
Чĕрене ăшăтать
Конституци хĕвелĕ.

Сив раштав та пире сивĕ мар,
Кăкăрта шăранать шĕлкăвар,
Ку вăл — ырлăх мехелĕ.
Çĕршыва çутатать,
Чĕрене ăшăтать
Конституци хĕвелĕ.

Кур ак, тусăм, чăваш çĕршывне,
Халь кунта та хĕл мар, çуркунне;
Ырă савăк та меллĕ.
Çĕршыва çутатать,
Чĕрене ăшăтать
Конституци хĕвелĕ.

Куçсем уçă та ĕмĕт таса,
Ĕç ĕçлетпĕр эпир юрласа,
Пирĕн пурнăç илемлĕ.
Çĕршыва çутатать,
Чĕрене ăшăтать
Конституци хĕвелĕ.

Пирĕн ирĕк юрра ир çинче
Чунпала ĕнерет çут тĕнче, —
Юрă çитмĕл чĕлхеллĕ.
Çĕршыва çутатать,
Чĕрене ăшăтать
Конституци хĕвелĕ.

Ĕмĕр тав та мухтав Сталина,
Уçса пачĕ вăл çут самана.
Ку вăл—халăх телейĕ.
Çĕршыв çутатать,
Чĕрене ăшăтать
Конституци хĕвелĕ.

Аркадий ЕÇХĔЛ.

Вилĕме çĕнтерсе

(Калав)

Кĕрхи çил ваш-ваш-ваш вĕрет, вĕтĕ сивĕ çумăр кас-кас-кас килет, Митюк питне çăтăр-çăтăр йĕпете-йĕпете илет. Митюк чĕркуççи таран пылчăк çине кукленсе ларнă та, кĕрхи çиле те, сивĕ çумăра та туймасть. Вăл куçпа-куç вилĕм умĕнче тăрать. Машинăн малти урапи мина çине çитсе тăнă, минăна вырăнтан хускатнă. Мина халь-халь çурăлса кайса, машинăна та, Митюк та сывлăша ывăтса ярас пек.

— Сирĕлĕр ман патăмран,—терĕ тăкăскă сасăпа Митюк юлташĕсене. Хăй, кăштах шухăша кайса, кĕтсе тăчĕ. Вăл тăватă çул хушшинче вăрçăн темĕнле хăрушă саманчĕсене те куркаланă. Дон урлă каçнă. Днепр урлă пирĕн çарсене кимĕпе пуçласа каçарнă. Миус урлă кĕпер хывнă. Анчах вилĕм тени нихăçан та, хальхи пек, ăна çывăх пулман.

— Пурте сирĕлтĕр-и?—терĕ вăл тепĕр хут юлташĕсене. Ăна никам та сасă памарĕ. Юлташĕсем унтан самай инçене кайса тăнă та, унăн сассине те илтмеççĕ, ăна та сасă памаççĕ. Кăна кура Митюк аллисене малалла тăсрĕ, аллапписўсемпе мина çинчи пылчăка майĕпен шăлса, тасатма тытăнчĕ.

Самантран вăл мина çинчи пылчăка шăла тасатрĕ те йывăррăн сывласа илчĕ. Малалла ĕçĕн чи хăрушă сыпăкĕ. Мина взрывательне авăрласа, минăн хăрах айккинчи шăт... чиксе хураççĕ. Мина хупăлчи çине пуссан, унăн хупăлчи хăйĕн усăк хĕррипелле взрыватель чеккине тĕртсе кăларать те, мина çурăлса каять. Халь ку взрыватель пĕтĕмпех тăпрапа пылчăк айне пулнă. Минăна сиенсĕрлетес тесен взрывателе кăлармалла. Взрывателе кăларас пулсан, ун çинчи тăпрана тасатмалла. Тăпрана тасатнă чухне çĕре кăшт хускатсанах чекка тухса ўкме пултарать. Чекка тухса ўксен, мина та çурăлса каять.

Митюк каялла çавăрăнса пăхрĕ. Пылчăклă çул тăрăх машинăсем, тупăсем вĕçĕмсĕр. Вĕсен малалла каймалла. Вĕсем, çул çинчи минăсене кăларса çула тасатасса кĕтеççĕ. Митюк çакна пĕтĕм чĕререн туять. Ăна пĕр самант машинăсене çак минăсем мар, вăл хăй тытса тăнăн туйăнса каять.

Митюк писиххи çинчи йĕнерен çĕçĕ кăларчĕ, унпала взрыватель çинчи тăпрана чавма тытăнчĕ. Майĕпен, асăрхавлăн чавать. Тăпра катăкĕсене пўрне вĕçĕсемпе тытса илсе хурать.

Çĕçĕ вĕçĕ тимĕр взрыватель çине перĕнсе чанк! турĕ. Чи хăрушă самант! Çĕçĕ вĕçĕ чекка çине перĕнсен, ăна вырăнĕнчен тĕртса кăларма пултарать. Акă вилĕм! Анчах Митюк ун çинчен маннă ĕнтĕ. Вăл халь пĕтĕмпех çав взрывателе кăларса, минăна сиенсĕрлетес шухăшпа çеç пурăнать.

Хăрушă минутсем вăраммăн туйăнаççĕ. Анчах Митюк асăрхамасть вĕсене. Вăл взрыватель пуçне чавса кăларчĕ те, чеккана икĕ пўрнепе аял енчен çавăрса ярса тытрĕ. Ку—çак самантрах вилме пўрнĕ этем вилĕме çĕнтернĕ тапхăр. Халь ĕнтĕ вăл чеккана ниепле те тухса ўкме парас çук. Вилĕм хыçа юлать. Чăрсăр этем малалла ĕçлет. Мина айккине взрывателе туртса кăларма çĕре хăрах алăпа чавса пушă вырăн тăвать. Взрывателе çав пушă вырăн еннелле çăмăллăн туртса кăларса илет. Хăй, савăнăççăн та ăшшăн кулса, çăмăллăн сывласа ярать. Унтан минăна машина урапи айĕнчен хирсе кăларать те, çул хĕррине ывăтса ярать. Ура çине сиксе тăрать, калле-маллен чупса, шăнса хытнă шăмшаккине ăшăтма тытăнать. Лачкам йĕпе шинел аркисене, çанисене пăрса типĕтет, вара юлташĕсем патне утать.

Ку мина çул çинче юлашки пулчĕ. Çак юлашки мина Митюкшăн чи йывăрри, чи хăрушши пулчĕ. Митюк ăна сиенсĕрлетрĕ е вилĕмпе кĕрешсе вилĕме çĕнтерчĕ, пирĕн тупăсем валли малалла кайма çул уçса пачĕ.

В. АХТУБАЙ.

Республика тăрăх

ПРОИЗВОДСТВĂРИ ÇИТĔНЎСЕМ

Республикăри промышленность предприятийĕсемпе артельсем Сталинла Конституци кунне производствăра пысăк çитĕнўсем тунипе кĕтсе илчĕç.

Кошелев юлташ директор пулса ĕçлекен завод коллективĕ Сталинла Конституци кунĕ тĕлне çулталăкри производство планне 107 процент тултарчĕ. Заводра стахановецсен йышĕ те кулленех ўссе пырать. Вăрман хатĕрлекен цехра (начальникĕ Вдовин юлташ) уйрăмах М. Мубаракшин, Т. Соя, Е. Эльдеева тата Е. Малофеева вăрман касакансем тухăçлă ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленех 8—12 кубометр таран йывăç касса хатĕрлеççĕ. Вăрман турттарас тĕлĕшпе Гаркавый, Шаправский, Ефимов тата Андреев юлташсем кунне 20—25-шер кубометр йывăç турттарса кăлараççĕ.

Механизациленĕ транспорт цехĕнче (начальникĕ Бергер юлташ) уйрăмах Трофимов, Янюшкина, Смолин, Оськин, Иванова тата Никулова шоферсем лайăх ĕçлеççĕ. Çак цехри А. Кузнецовпа Н. Мочалов тимĕрçĕсем кулленхи нормăна 200 процент таран тултараççĕ.

Çулйĕр тăвас тата юсас тĕлĕшпе ĕçлекенсенчен М. Ефимова, А. Капустина тата И. Деревягин юлташсем лайăх ĕçленине палăртмалла. Вĕсем çулйĕре яланах йĕркеллĕ тытаççĕ, çĕнĕ кварталсене кĕмелли çулсене вăхăтра хывса, вăхăтра юсаса тăраççĕ.

Халĕ завод коллективĕ тунă çитĕнўсемпе лăпланса лармасăр, СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсене çĕнĕ çитĕнўсемпе пырса кĕрессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырать.

ХАМĂРĂН ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂНА ИРТТЕРСЕ ТУЛТАРТĂМĂР

КАНАШ. Хулари апат-çимĕç комбиначĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура пысăк çитĕнўсем турĕ. Комбинат çулталăкри производство программине ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 120 процент тултарма обязательство илнĕ пулсан, вăл çав кун тĕлне плана 145 процент тултарчĕ.

Ăмăртура уйрăмах премĕксем тăвакан цехпа конфетсем тăвакан цех малта пычĕç. Вĕсем октябрь уйăхĕнчи плана 253—260 процент тултарчĕç. Комбинатри Зайцева, Корбунова, Сергеева, Столбова, Бахмутова тата Алексеева стахановкăсем хăйсен уйăхри заданине 200—260 процента яхăн тултарчĕç.

Комбинат коллективĕ хăй тунă çитĕнўсене çирĕплетсе хурас тесе, ĕç тухăçлăхне кулленех ўстерсе пырать.

РАБОЧИСЕН ПРОИЗВОДСТВĂЛЛĂ ÇĔНĔ ÇĔКЛЕНĔВĔ

ЙĔПРЕÇ. В. М. Молотов юлташăн историллĕ докладне сўтсе-явнă хыççăн «Кооплеспром» артель коллективĕ татах та тухăçлăрах ĕçлеме тытăнчĕ.

Тукăн тата çунасем тăвакан цехсенчи рабочисем нормăна куллен 150—180 процента яхăн тултарса пыраççĕ. Купповпа Лысов юлташсем хăйсен кулленхи нормине 180 процентран кая мар тултараççĕ.

Столярнăй цех коллективĕ те ĕç тухăçлăхне ўстерсех пырать. Кунта уйрăмах Начанинпа Радин юлташсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем нормăна кулленех 180 процент ытла тултарса пыраççĕ. Вăрман хатĕрлес ĕçре те стахановецсен йышĕ ўссех пырать. Васильевăпа Абрамова юлташсем нормăна кулленех 160 процент тултарса ĕçлеççĕ.

ПЛАНРАН ИРТТЕРСЕ 15.200 ПĂТ ТЫРĂ ПАНĂ

ПĂРАЧКАВ. Районри колхозсем Сталинла Конституци кунне хатĕрленнĕ май государствăна тырă парас ĕçе чылай хăвăртлатрĕç.

«Луч», «Красный Пахарь» тата «Ильич» колхозсем декабрь уйăхĕнче 3 кун хушшинче кăна государствăна планран иртерсе 1.200—1.500-шер пăт, «Красная степь», «Первомайский», «Победа», «2-ая пятилетка», «Правда» колхозсем 960-шер пăт тырă панă.

Районĕпе 3 кун хушшинче планран иртерсе государствăна 15.200 пăт ытла тырă панă.

Нимĕссен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

ДЕКАБРĔН 3-мĕшĕнчи ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 3-мĕшĕнчи ирхи ларура Америка айăплаканĕсен представителĕ Олдермен сăмах тухса каланă. Вăл тăватă государство айăплаканĕсем çитес вунă кун хушшинче мĕнле йĕркепе тухса калама шутлани çинчен каласа панă. Судăн паянхи ларăвĕнче Германи Чехословакие тапăнни çинчен калаçмалла. Ытларикун, декабрĕн 4-мĕшĕнче, Англи айăплаканĕ Шоукросс тухса калать, вăл Германи Польшăна, Югославие, Грецие, Голландие, Данине, Бельгие, Норвегие тата Франције мĕнле условисенче тапăнни çинчен калаçа парать. Унтан Франци айăплаканĕ сăмах тухса калать, вăл Германи фашисчĕсем пĕтĕм тĕнчери правăпа этемлĕхе хирĕç мĕнле преступленисем туни çинчен каласа парать. Совет Союзĕн айăплаканĕ фашистсем Европăн хĕвелтухăç пайĕнче тунă преступленисем çинчен каласа парать.

Çакăн çинчен каласа пĕтерсен, Олдермен хăйĕн сăмахне калама пуçлать. Вăл çапла калать: гитлеровецсем 1933 çулта влаçа хăйсен аллине тытса илнĕренпе 1936 çулччenех хĕçпăшалланмалли пысăк программăна пурнăçа кĕртсе пынă. 1936 çул хыççăн çав программăна тата ытларах пысăклатнă. 1938 çулхи март уйăхĕнче Германи Австрие тытса илнĕ те çийĕнчех Чехословакие тапăнма хатĕрленме пуçланă. 1938 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнчех Гитлер Кейтельпе тĕл пулса калаçнă. Çавăн чухне вĕсем Чехословакие тапăнма сăлтав шыранă. Шăп çав вăхăтра ĕнтĕ, Чехословакие тапăнма сăлтав пултăр тесе, Германин Прагăри посланникне вĕлересси çинчен сўтсе-явнă. Çавăн çинчен калаçнине Гитлер адъютанчĕ Шмундт çырса хунă.

Австрие тытса илнĕ хыççăнах Чехословакие тапăнмалли плана, «симĕс план» текенскере, çырса хатĕрленĕ. Айăплаканĕ суда «документсен иккĕмĕш номерлĕ кĕнеки» ятлă кĕнеке парать. Унта Кейтелĕн, Иодлĕн, Герингăн приказĕсене, Гитлер патĕнче пулнă канашлусем çинчен Шмундт çырса хунисене тата ытти документсене те кĕртнĕ. Вăл документсене Америкăн çар чаçĕсем Берхтесгаден сывăхĕнчи Обер-Зальцбургра тупнă. Чехословакие тапăнма хатĕрленнĕ вăхăтра Германи хăй хатĕрленине пур майпа та пытарма тăрăшнă, вăл Чехословаки çарне мобилизацилеттересшĕн пулман. 1938 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче, Австрие тытса илнĕ кун, Геринг Чехословакин Берлинри посланникне Мастныя çапла каланă: Австрири ĕçсем Германипе Чехословаки хушшинчи çыхăнусене улăштармĕç, тенĕ. «Эпĕ сире ку тĕлĕшпе чыслă сăмах паратăп»,—тенĕ Геринг. Нейрат та Мастныя çапла каланă: Германи хăйне-хăй 1925 çулта тунă договорпа çыхăннă тесе шутлать, тенĕ; çав договор тăрăх Германи Чехословакин никама пăхăнманлăхне хисеплеме сăмах панă. Анчах çав вăхăтрах Шмундт урлă Кейтельпе Браухич генералсене инструкци панă; çав инструкцире Гитлер «симĕс плана» тĕплĕн вĕренме пуçлани çинчен каланă. Çав планăн тĕп шухăшĕ улшăнмасть, тенĕ. Кĕтмен çĕртен тапăнмаллине унта тата вăйлăрах палăртнă.

Гитлер 1938 çулхи майăн 30-мĕшĕнчех Чехословакие тапăнма хушакан хут çине алă пуснă, çав хута мĕн пурĕ те 4 экземпляр çеç пичетлесе хатĕрленĕ. Çав хут çине тата генеральнăй штаб подполковникĕ пулнă Цейцлер алă пуснă. Çав хутăн иккĕмĕш пайне çакăн пек ят панă: «Бăнтăр-хĕвелтухăç еннелле ытларах тапăнса, икĕ фронтра вăрçасси». Унта Германи çарĕсене Чехословаки чиккипатне илсе пырса тăратасси çинчен тĕплĕн каласа панă. Унта тўрех çапла каланă: «Эпĕ вирлĕн пырса тапăнса, Чехословакие çывăх вăхăтрах çĕмĕрсе тăкма йышăнни çаплипех юлать», тенĕ. Çав хут çинче, уйрăмах та Франци Германие хирĕç вăрçма хăрасан, Польшăпа Венгри Чехословакие хирĕç вăрçма пултарассине шута илнĕ. Росси Чехословакие çар ярса, уйрăмах та сывлăшри вăйсем ярса пулăшĕ, тенĕ. Унтан çар, сывлăшри вăйсем, çавăн пекех тата пропаганда тĕлĕшпе конкретнăй задачăсем кăларса тăратнă.

Олдермен кăтартнă документсенче Чехословаки çарĕ мĕнле хĕçпăшалланни çинчен кĕскен çырса хуни пур. Ăна 1938 çулхи июнĕн 9-мĕшĕнче çырнă, Цейцлер алă пуснă. Ăна Гитлер хушнипе çырнă. Айăплакан малалла 1938 çулхи июнĕн 18-мĕшĕнче панă кăтартăва вуласа парать. Ăна «К» саспалли (ку — Кейтель тенине пĕлтерет) тата «Ц» саспалли (ку—Цейцлер тенине пĕлтерет) çырса алă пуснă. Çав кăтартăвăн пĕрремĕш пайне «пĕтĕмĕшле кăтартса паракан принципсем» тесе ят панă. Ют государствăсем Германие хирĕç маларах вăрçăпа тухма пултарасси курăнмасть, тенĕ унта. Малалла унта çапла каланă: «Манăн чи çывăхри тĕллев—Чехословаки ыйтăвне татса парасси пулать. Эпĕ çав тĕллеве пурнăçа кĕртмешкĕн политикăри кирек мĕнле меллĕрех майпа та усă курма шут тытрăм. Анчах та эпĕ Франци пире хирĕç вăрçăпа тухас çуккине тĕплĕн пĕлсен çеç Чехословакипе вăрçма пуçлăп. Франци пире хирĕç вăрçмасан, Англи те пирĕн ĕçе хутшăнас çук; Рейн облаçне оккупациленĕ чухне те, Австрие йышăннă чухне те çавăн пек пулнăччĕ», тенĕ.

Айăплакан çавăн пекех тата Германин 1938 çулхи августăн 25-мĕшĕнче çырнă секретлă документне вуласа парать, çав документа Германин сывлăшри вăйĕсен генеральнăй штабĕн 5-мĕш отделĕ пичетлесе кăларнă. Çав документра «симĕс плана» пурнăçа кĕртнĕ чухне Германи авиацийĕн мĕн-мĕн тумаллине кăтартса панă. Пĕрремĕш страницăра унта политикăллă лару-тăрăва кĕскен çутатса панă. Унта çапла каланă: «Великобритани-Франције вăрçăра активлăн пулăшма сăмах парсан çеç Франци пире хирĕç вăрçăпа тухма пултарĕ, тесе шутлаççĕ. Совет Союзĕ, хĕвеланăçĕнчи державăсем майлă пулса çийĕнчех вăрçа хутшăнĕ, теççĕ. США хĕвеланăçĕнчи державăсене шухăш-кăмăлпа экономика енчен пулăшĕ. Итали, Испани, Венгри тата Япони пире кăмăллă нейтралитет тытса тăрĕç».

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Германи командованийĕ «хĕрлĕ план» тунă. Çав плана 1938 çулхи июнь уйăхĕнче çырса хатĕрленĕ, ăна мĕн пурĕ 38 экземпляр пичетленĕ. Айăплакан çав планăн 16-мĕш экземплярĕн фотоўкерчĕкне суд аллине парать. Вăл документра хĕвеланăçĕнчи державăсем Чехословаки майлă пулса вăрçа хутшăнсан, Германин çавна ответлесе мĕн-мĕн тумалли çинчен каланă.

Чехословакие тапăнма хатĕрленсе, Германи Венгрие хăйне пулăшма сăмах партарасшăн пулнă. Айăпланакан Иодль хăйĕн дневникĕнче (айăплакан, документ вырăнне хурса, ăна трибунал аллине панă) августăн 21—26-мĕшĕнче çапла çырнă: «Германие Венгри регенчĕ килчĕ, унпа пĕрле премьер-министр, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ тата çар министрĕ килчĕç. Вĕсем çак шухăша каласа пама килнĕ: пĕтĕм тĕнчери вăрçăра, Германи çарĕсем пулăшнипе, ĕлĕкхи Аслă Венгри хăйĕн кивĕ чиккисем таранах сарăлĕ, тесе калама килнĕ. Вĕсене çапла ăнлантарса панă: эпир Венгрирен нимĕн те ыйтмастпăр. Анчах Чехословаки провокациллĕ ĕçсем тусан, савăн пек ĕçсене ыранах тусан та, Германи çийĕнчех Чехословакие хирĕç вăрçăпа тухать. Венгри Чехословакие хирĕç вăрçасшăн пулсан, вĕсен вăрçма май пулать. Анчах та Германи Венгрипе Польша хушшинче арбитр пулмасть». Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн пĕр заместителĕ Верман 1938 çулхи августăн 23-мĕшĕнче Венгри министрĕсем Имредипе Канья Риббентроппа тата Вейцзекерпа калаçнине çакăн пек çырса хунă: «Канья икĕ ыйту лартрĕ: пĕрремĕшĕ—Венгрипе Кĕçĕн Антанта хушшинчи çыхăнусем çинчен, иккĕмĕшĕ—Чехословаки ыйтăвĕ». Риббентроп çапла ыйтрĕ, тесе çырса хунă Верман: Гитлер Чехословакие вăйпа тапăнма шут тытсан, Венгри мĕнле позици йышăнĕ? Венгрерсем икĕ йывăрлăх çинчен каларĕç. Венгри хăйĕн çарĕпе çурçĕр еннелле тата, тен, хĕвелтухăç еннелле кайсан, Югослави нейтралитет тыттăрччĕ, тенĕ. Венгри нумай пулмасть çеç хĕçпăшалланма пуçларĕ, вăрçа хатĕрленме ăна тата пĕр çул е икĕ çул кирлĕ пулать, терĕç. Риббентроп çапла каларĕ: Югослави Венгрие хирĕç кайма хăяймĕ, мĕншĕн тесен ăна тĕнĕл держависем икĕ енчен те хĕскĕчпе хĕстерсĕ лартнă. Румыни вырăнтан та хускалас çук. Англипе Франци те тапранмĕç. Англи хăйĕн империне хăрушлăха сĕтĕрсе кĕртме шутламĕ, терĕ. Риббентроп тата тепĕр хут çапла каларĕ: кам та кам чикĕсене улăштарас тет, унăн çак лайăх майпа усă курасах пулать, Чехословакие тапăнас ĕçе хутшăнас пулать, терĕ.

Çав документрах тата Хортипе Гитлер калаçнине çырса хуни пур. «Хорти хăй Англирен хăранине пытарма шутламарĕ, —тенĕ документра. — Анчах та вăл Чехословакие хирĕç пуçланас вăрçа Венгри хутшăнасшăн пулни çинчен каласа пачĕ. Апат çинĕ хыççăн Имреди господин фюрерпа калаçнă чухне фюрер ăна—эпĕ Венгрирен нимĕн те ыйтмастăп, тесе каласа парсан, Имреди кăшт хавасланчĕ пулмалла. Фюрер çапла каларĕ: Чехословакие хăçан тапăнассине пĕлместĕп-ха, терĕ. Анчах вăл çакна палăртса хучĕ: кам апат çиме ларас тет, унăн апат хатĕрлес ĕçе те хутшăнмалла. Венгри генеральнăй штабсене пĕр-пĕрипе калаçтарас тет пулсан, эпĕ çакна хирĕç мар, терĕ». Гитлер венгерсене «кам апат çимĕ ларас тет, унăн апат хатĕрлес ĕçе те хутшăнмалла» тесе калăпи, документсем тăрăх пăхсан, венгерсене çирĕп шухăшлаттарнă. Айăплакан малалла Риббентроп Венгрин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Каньяпа 1938 çулхи августăн 25-мĕшĕнче калаçнине Вейцзекер (Риббентроп заместителĕсенчен пĕри) çырса хунин хăшпĕр вырăнĕсене вуласа парать. Унта çапла каланă: «Германипе Чехословаки пĕр-пĕрипе вăрçас пулсан, Венгрин вăрçа хатĕрленмелле пуласси çинчен каланă чухне Канья темиçе кун каялла çапла каланăччĕ: хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен хăватне ўстермешкĕн Венгрие пĕр çултан пуçласа икĕ çула çити вăхăт кирлĕ, тенĕччĕ. Анчах вăл паян хăйĕн çав сăмахне улăштарчĕ. Вăл çапла каларĕ: Венгрин вăрçă тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвĕ лапăхах, терĕ. Венгри Германипе Чехословаки вăрçине кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнче хутшăнма хатĕр, терĕ».

Айăплакан малалла Германипе Чехословаки хушшинчи вăрçă тĕлĕшпе Итали мĕнле позици йышăнса тăни çинчен калать. Айăплакан кăтартнă документсенчен çакă курăнать: Германи Чехословакие тапăма шутланине Муссолини пĕтĕмпех ырланă, вăл Франци, Чехословаки майлă пулса, Германие хирĕç вăрçма шутласан, ăна тытса чармашкăн Франци чикки çумĕнче хăшпĕр ĕçсем туса иртерме те сăмах панă. 1938 çулхи июлĕн 18-мĕшĕнче Риббентроп Итали посолĕпе Аттоликопа калаçнă. Риббентроп итальянецсене Германи Чехословакие тапăнма шутлани çинчен ĕненмеллех каланă. Аттолико, тесе çырса хурать Риббентроп, Чехословакие тапăнмалли кун чылай инçине, Аттолико икĕ уйăхлăха канма кайма пултарнине те пĕлет. Анчах августăн 27-мĕшĕнче Аттолико каллех Риббентроп патне пынă. Вăл, Муссолини хушнă тăрăх, Германи Чехословакие хăçан тапăнассине пĕлтерме ыйтнă. Муссолини, Франци чикки патĕнче кирлĕ ĕçсем туса ирттермешкĕн, çав кун çинчен пĕлтерме ыйтать, тет Аттолико. «Эпĕ Аттолико посола, малтанхи пекех, çапла каларăм,—тесе çырать Риббентроп:—эпĕ халлĕхе нимĕн те пĕлтерме пултараймастăп, анчах та сире çакна шантарса калатăп: хамăр йышăнни çинчен эпир чи малтан Муссолиние пĕлтерĕпĕр, терĕм».

Германи Чехословакие малтан шухăшласа хунă тăрăх тапăнни çинчен каласа, Олдермен Иодль дневникĕн хăшпĕр вырăнĕсене вуласа парать. Иодль 1938 çулхи сентябрĕн 6-мĕшĕнче çапла çырса хунă: «Генеральнăй штаб начальникĕ артиллери генералĕ Гальдер Венгрин генеральнăй штаб начальникĕпе Фишерпа калаçнă. Унччен эпĕ Гальдера çапла каланăччĕ: фюрер венгерсене Чехословакие хăçан тапăнасси çинчен пĕлтерме хушмасть, тенĕччĕ». Сентябрĕн 8-мĕшĕнче Иодль çапла çырса хунă: «Штюльпнагель генерал çарăн верховнăй командованине Чехословакие тапăнмалли кун çинчен 5 кун малтан пĕлтерĕпĕр тесе шантарса çырса пама ыйтать. Эпĕ çапла тума килĕшрĕм, анчах та çапла хушса каларăм: çанталăк мĕнле пулассине икĕ кун малтан çеç каласа хума пулать, çавăнпа плансем улшăнма пултараççĕ; паллах, ытти нацисем пире хĕсме хăтланĕç. Пирĕн нервсен çак тĕреслевне тўссе ирттермелле пулать, терĕм». Сентябрĕн 10-мĕшĕнче Иодль çапла çырса хунă: «Гальдер генерал Нюрнберган таврăнчĕ. Вăл çапла пĕлтерчĕ: фюрер ĕç повинноçĕн отделĕсем сентябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа çарăн верховнăй командованине пăхăнса тăмалли çинчен калакан декрета алă пусрĕ. Унтах çапла йышăннă: 13-мĕшпе 2-мĕш моторлă дивизисене Рейхенау армийĕпе пĕрлештермелле, вĕсем вырăнне ытти икĕ дивизие ямалла». 1938 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче Иодль çапла çырса хунă: «Паян пропаганда министерствин статс-секретарĕпе Янкепе калаçнă. Унпа пирĕн пĕтĕм тĕнчери правăна пăсмалла пулсан, мĕн тумалли çинчен тата çав правăна пăснипе пирĕн тăшман мĕнле усă кума пултарасси çинчен калаçнă», тенĕ.

Çак тĕлте айăплакан Германин питĕ секретлă документĕн хăшпĕр вырăнĕсене вуласа парать. Çав документа мĕн пурĕ те 7 экземпляр çеç пичетленĕ, ăна Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабне, тип çĕр çинчи çарăн генеральнăй штабне, ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине, тинĕс штабне тата авиаци министерствине янă. Вăл документа 1938 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче çырнă, ăна хĕçпăшаллă вăйсен верховнăй командованийĕ çырнă. Кейтель хушнипе, çав документ çине Бюркнер ятлă çын алă пуснă. Çав документпа пĕрле янă çырура Бюркнер çапла çырать: «Куппа пĕрле пирĕн çар пĕтĕм тĕнчери правăна мĕнле-мĕнле пăсассине кăтартакан список яратăп. Çак документăн хăшпĕр графисене асра тытма ыйтатăп», тенĕ. Вăл документа çакăн пек ят панă: «Пĕтĕм тĕнчери правăна пăснă май пропаганда тумалли çинчен». Документра çакăн пек графасем пур: а) хирĕçўллĕ ĕçсем, б) примерсем, с) пĕтĕм тĕнчери право çавăн çине мĕнле пăхни, д) вăрçăри законсем çине кăтартса тўрре кăларни, е) пропаганда министерствин мĕнле сулпа пымалли. Çав документра пĕтĕм тĕнчери правăна пăсассин тĕрлĕ примерĕсене илсе кăтартнă тата вĕсене пăснине пропагандăн мĕнле тўрре кăлармаллине кăтартса панă.

Çав документран çакă курăнать: Германири фашистсем тискеррĕн вăрçмаллине малтанах палăртса хунă, хăйсен çарĕсене тата пропаганда органĕсене çав тĕлĕшпе кăтартусем панă. Акă, «примерсем» тенĕ графара çапла каланă: «Прагăна сывлăшран пырса тапăннă чухне Британин Прагăри посольствин çуртне шеççĕ». «Вăрçăри законсем çине кăтартса тўрре кăлармалли» тенĕ графара çапла каланă: «Çакна пуринчен малтан çапла каласа ăнлантарма çăмăл: Британи посольстви вăрçă объекчĕсем çывăхĕнчех ларать, çав объектсем çине бомбăсем пăрахмаллах пулнă, теме пулать. Çакнах тата—тăвас мар тенĕ çĕртен пулнă япала, тесе ăнлантарма пулать». Тепĕр пример: «Чехсем газпа усă курма пуçланă тесе пĕлтернĕ пирки эпир хамăр çарсене газлă снарядсемпе усă курма хушнă». «Пĕтĕм тĕнчери право кун çине мĕнле пăхни» ятлă графара çапла каланă: «1925 çулхи июнь уйăхĕнче 40 государство, çав шутра Чехословаки те йышăннă деклараци вăрçăра пăчăхтаракан газсемпе, химиллĕ япаласемпе тата бактерисемпе усă курма чарнă. Хăшпĕр государствăсем çав деклараци çумне хăйсем енчен çапла хушса хунă: тăшман газсемпе усă курас пулсан, эпир ку декларацие пурнăçа кĕртме пăрахатпăр, тенĕ». «Вăрçăри законсем çине кăтартса тўрре кăларни» ятлă графара çапла каланă: «Тăшман (ку хутĕнче—чехсем) газпа усă курнă тенине тĕнче ĕненмесен, ăна ĕнентерме тăрăшмалла. Май килсен, газлă снарядсемпе пеме чарнине тăшман чи малтан хăй пăснă, тесе кăтартса, эпир газлă снарядсемпе пенине тўрре кăларма тăрăшмалла. Çапла каланине те ĕненмесен, газсемпе усă курса вăрçнине, итальянецсем Абисинири вăрçă вăхăтĕнче тунă пек, законлă репресси вырăнне хумалла. Çакна вара тўрре кăларма тăрăшмалла». Тепĕр пример: «Чех халăхне вăрçăри ĕçсем хушнă пирки, тылри районсене куçараççĕ». «Вăрçăри законсем çине кăтартса тўрре кăларни» тенĕ графара çапла каланă: «Кăна эпир çынсене бомбăсем лекесрен хăтарас тесе турăмăр, тесе, ăнлантарма çăмăлтарах». Тепĕр пример: «Германи авиацийĕ, хăйĕн тивĕçне пурнăçласа, Польша территорийĕ урлă вĕçсе каçать». «Тўрре кăларни» ятлă графара çапла каланă: «Чи малтан çакна тунма хăтланса пăхмалла. Ăна çынсем ĕненмесен, Польша правительствинчен каçарма ыйтмалла (ку Польша правительстви мĕнле позици йышăннинчен килет)».

Ирхи лару çакăнпа пĕтет.

АНГЛИН ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕМ ИНДОНЕЗИЕЦСЕМПЕ ÇАПĂÇНИ

ДЕЛИ, декабрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Делири радио декабрĕн 2-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: Ява утравĕ çинче пуринчен ытла Бандунг районĕнче çапăçма пуçланă, унта Англи çарĕн Инди чаçĕсене илсе пырса тăратнă, вĕсен пулеметсем, мортирăсем тата автоматлă хĕçпăшал пур. Инди чаçĕсем патне танковăй подразделенисем янă.

Британин радио саракан корпорацийĕн корреспондечĕ Батавирен пĕлтернĕ тăрăх, индонезиецсем хăйсен вăйĕсене Бандунг районнĕ пухаççĕ.

ТАСС хирĕçлесе калани

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче Францири хăшпĕр хаçатсенче Францири «Ажанс д'эдисьон э де пресс» ятлă агентствăн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерўре Совет Союзĕн Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсенчи посолĕ А. А. Громыко, хальхи вăхăтра Лондон хулинче ĕçлекенскер, кăтартусем илни çинчен каланă. Çав кăтартусем шутĕнче çакăн пек кăтартусем пур пулать: «Аслă тройкăна» тĕл пулса калаçма сĕннине хирĕç тăмалла; висĕ министрăн канашлăвĕ çинчен татăклă калаçмалла мар; Германие оккупацилесе тăрассине 1949-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр пĕтермелле; Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Германири пек контроль комиссийĕ туса хума çине тăрсах ыйтмалла т. ыт. те.

Лайăх пĕлсе тăракан ушкăнсенчен ТАСС илнĕ хыпарсем тăрăх, «Ажанс д'эдисьон э де пресс» агентстви çапла çырса пĕлтерни тата çав агентство нумаях пулмасть Совет Союзĕ çинчен панă ытти хыпарсем те пĕтĕмĕшпех суя. «Ажанс д'эдисьон э де пресс» агентствинче тĕрлĕ жуликсемпе намăса пĕлменскерсем лараççĕ пулмалла, вĕсен мĕнпур ĕçĕ те Совет Союзĕ çинчен тĕрлĕ элек сарасси кăна пулса тăрать

Мускава Франци республикин суту-илў делегацийĕ килнĕ

Декабрĕн 1-мĕшĕнче Мускава Франци республикин суту-илў делегацийĕ килнĕ. Делегацие ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин экономика департаменчĕн директорĕ Эрве Альфан господин ертсе пырать.

Центральнăй аэродромра делегацие çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: СССР Тулашри Суту-илў Халăх Комиссарĕн Заместителĕ М. С. Степанов, Совет Союзĕн Францири суту-илў представителĕ С. В. Пожарский, СССР Наркоминделĕн 1-мĕш Европа отделĕн Заведующийĕ С. П. Козырев, Тулашри Суту-илў Халăх Комиссариачĕн Протокол отделĕн Начальникĕ В. Г. Кириллов, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующийĕн Помошникĕ Н. Н. Яцкевич.

Çавăн пекех тата делегацие Францин Мускаври посольствин советникĕ Шарпантье господин тата посольствăн ытти сотрудникĕсем те хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Çав самолетпах Мускава Совет Союзĕн Францири Суту-илў представителĕн заместителĕ К. К. Бахтов вĕçсе килнĕ.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабсельколсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00469 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф. 6. 59х42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.